24-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1942 ЯНВАРЬ 24 ШӐМАТКУН 20 (6045) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖН ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ.

Фашистсем Литвара, Латвире тата Эстонире тискер кайӑкла ӗҫсем туни ҫинчен

Балтика таврашӗнчи республикӑсенчи обществӑллӑ деятельсем кӑларнӑ деклараци

Нимӗҫсен пропаганди Хӗрлӗ Ҫар тискер ӗҫсем тӑвать тесе суя сӑмахсем сарать. Хӗрлӗ Ҫар Балтика таврашӗнчен вӑхӑтлӑха тухса кайнӑ чухне Балтика таврашӗнчи халӗ гитлеровецсем оккупациленӗ республикӑсенчен граждӑнла халӑха вӑйпах хӑваласа тухса кайнӑ тесе, провокациллӗ хыпарсем сарать.

Пире, Балтика таврашӗнче — Литвара, Латвире, Эстонире — вӑрҫӑ ӗҫӗсем мӗнле пулса пынине курнӑ свидетельсене, ҫак республикӑсен граждӑнӗсене, нимӗҫсен фашистла ҫав ирсӗр элекӗ ҫавтери тарӑхтарать.

Нимӗҫсен фашистла захватчикӗсем, Совет Союзӗнчи халӑхсем ҫине вӑрӑхурахла вӑрттӑн тапӑнса, тӗрлӗ районсенче, ҫав шутрах Балтика таврашӗнчи республикӑсенче те юнлӑ та тискер кайӑкла ӗҫсем туса пынине пӗтӗм тӗнче пӗлсе тӑрать ӗнтӗ. Нимӗҫсен фашистла захватчикӗсем мирлӗ хуласемпе ялсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ, ача-пӑчасене, хӗрарӑмсемпе старӑксене вӗлернӗ. Нимӗҫсен фашистла мародерӗсем мирлӗ халӑха ҫаратнӑ, хӗрарӑмсене пусмӑрласа намӑслантарнӑ. Вӗсем Балтика таврашӗнче заложниксем текен нимӗн айӑпсӑр ҫынсене цивилизациллӗ тӗнчере ку таранччен пулман тискерлӗхпе массӑллӑн вӗлерсе пӗтерме тытӑннӑ. Вӗсем хӑйсен ҫиллине шӑнараймасӑр, Балтика таврашӗнчи халӑхсен мухтавлӑ ывӑл-хӗрӗсем нимӗҫ захватчикӗсене партизансен пульлипе кӗтсе илнӗшӗн мирлӗ халӑхсене тавӑраҫҫӗ. Нимӗҫсен фашистла тискер кайӑкӗсем ӗнтӗ вӑрҫӑн малтанхи ирӗнчех Литвари чикӗ ҫывӑхӗнчи Паланта ятлӑ курортра вырнаҫнӑ пионерсен лагерӗ ҫине орудисенчен пенӗ, самолетпа вӗҫсе пырса бомбӑсем пӑрахнӑ. Унта 2000 ытла ача-пӑча пурӑннӑ. Нимӗҫсен фашистла варварӗсем Эстони ҫыранӗ ҫывӑхӗнче амаппиcене тата Эстонирен эвакуациленекен хӗрарӑмсемпе ача-пӑчасене илсе каякан «Тими» ятлӑ суднӑна, госпиталь судни пулнӑскере, бомбӑсем пӑрахса путарнӑ. Нимӗҫ фашисчӗсем Рига патӗнче, Вильнюс патӗнче тата ытти вырӑнсенче те фронт ҫывӑхӗнчи районсенчен тарса тухакан мирлӗ халӑха пулеметсенчен пенӗ. Вӗсем наступлени тунӑ чухне хӑйсен умӗнче хӗрарӑмсемпе ача-пӑчасене хӑваласа пынӑ.

Нимӗҫсен фашистла ирсӗрӗсем Балтика таврашӗнчи ҫӗршывсенче Вильнюсра, Каунасра, Даугавпилсра, Ригӑра, Тартура, Таллинра, Балтика таврашӗнчи ытти хуласемпе ялсенче те патриотсене массӑллӑн пере-пере пӑрахса, мирлӗ халӑхран продовольстви, кӗпе-тумтир, ҫӗртавар ҫаратса тухса, Вильнюсран, Каунасран, Ригӑран, Лепаирен, Таллинран пиншер рабочисене, инженерсене, врачсене ирӗксӗрлесе ӗҫлеттерме Германие илсе кайса, Литвари, Латвири тата Эстонири хресченсен Совет влаҫӗ валеҫсе панӑ ҫӗрӗсене туртса илсе, ҫав ҫӗрсене нимӗҫ баронӗсемпе колонисчӗсене салатса парса «ҫӗнӗ йӗрке» тума пуҫланӑ.

Литовецсем, эстонецсем, латышсем нимӗҫ оккупанчӗсен пусмӑрне пӗр хут ҫеҫ мар тӳссе ирттернӗ. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ Литвари, Латвири тата Эстонири граждӑнсем Хӗрлӗ Ҫарпа пӗрле хӑйсен тӑван ҫӗршывӗнчен тухса кайрӗҫ. Вӗсем, аслӑ вырӑс халӑхӗпе тата Совет Союзӗнчи ытти халӑхсемпе пӗрле тӑрса хӑйсен ҫӗршывӗсене вӑхӑтлӑха чуралантарнӑ нимӗҫ саратуҫисене хирӗҫ татах та вӑйлӑраххӑн кӗрешес тесе, хӑйсен тӑван ҫӗршывӗнчен тухса кайрӗҫ.

Нимӗҫ вӑрӑ-хурахӗсен ҫарӗ Хӗрлӗ Ҫар ҫинчен элексем сарса, ӑна Европӑри ҫӗршывсен халӑхӗсем умӗнче, пӗтӗм тӗнчери халӑх умӗнче вараласа кӑтартасшӑн. Анчах гитлеровецсен кун пек тума май килес ҫук. Балтика таврашӗнчи халӑхсем Хӗрлӗ Ҫара пӗлеҫҫӗ. Хӗрлӗ Ҫар вӗсене мирлӗ, творчествӑллӑ ӗҫ прави кӳрсе панине, хӑйсен ҫӗнӗ, ирӗклӗ, ҫавтери лайӑх пурнӑҫне тума пулӑшнине вӗсем пӗлеҫҫӗ. Литвара, Латвире, Эстонире Совет влаҫӗ пулнӑ ҫулталӑк—нациллӗ культура хӑватлӑн аталанса чечекленнин ҫулталӑкӗ пулса тӑчӗ. Ҫав вӑхӑт хушшинче ҫӗршер ҫӗнӗ шкулсем, халӑх университечӗсем, вулав ҫуртӗсем уҫӑлчӗҫ. Пиншер каччӑсемпе хӗрсем хӑйсен пурнӑҫӗнче пуҫласа университет алӑкӗн урати урлӑ каҫрӗҫ. Ҫӗнӗ театрсем уҫӑлчӗҫ, киввисем те хӑйсен ӗҫӗсене чылаях аслӑлатрӗҫ, писательсен, художниксен, музыкантсен творчествӑллӑ ӗҫне чечеклентерме кирлӗ условисене пурне те туса панӑччӗ.

Ҫак пурнӑҫа Гитлерӑн тискер кайӑкла йыткӗтӗвӗсем таптаса юн ӑшне путарчӗҫ. Гитлеровецсем Литва, Эстони, Латви халӑхӗсене нимӗҫлентерме тӑрӑшаҫҫӗ. Вӗсем наци культурине аркатаҫҫӗ, наци памятникӗсене пӗтерсе тӑкаҫҫӗ, шкулсемпе университетсене хупаҫҫӗ, тӑван чӗлхепе калаҫма чараҫҫӗ. Балтика таврашӗнчи ҫӗршывсенчен нимӗҫ фашисчӗсем хӑрушӑ ӗҫсен ҫӗршывӗ, ывмар ҫынсем выртакан барак туса хунӑ. Кунта сыпной тиф, сивчир, чума, чечче, холера тата проказа чирӗсем хӑрушла сарӑлса кайнӑ. Вӗсем хӑйсен ҫиллине нимӗнпе те шӑнараймаҫҫӗ. Анчах Литвари, Латвири тата Эстонири ирӗклӗхе юратакан халӑхсем фашистсем нумайлӑха пуҫпулха тӑрас ҫуккине пӗлеҫҫӗ.

Балтика таврашӗнчи халӑхсем Балтика таврашӗнчи ҫӗршывсенчен вӑхӑтлӑха чакса тухнӑ Хӗрлӗ Ҫар Гитлерӑн йыткӗтӗвӗсене аркатса тӑкассине пӗлеҫҫӗ. Вара литовецсем, латышсем, эстонецсем Совет Союзӗнчи ирӗклӗ халӑхсен ҫемьинче хӑйсен ҫӗнӗ пурнӑҫне ҫӗнӗрен тума май илӗҫ.

Гитлерӑн йыткӗтӗвӗсене аркатса тӑкас вӑхӑта ҫывхартас тесе, латышсем, эстонецсем, литовецсем Хӗрлӗ Ҫар ретне кӗреҫҫӗ. Балтика таврашӗнчи халӑхсен ывӑлӗсем, Хӗрлӗ Ҫар ретне тӑрса, гитлеровецсене хирӗҫ ҫапӑҫассине хӑйсен таса тивӗҫлӗхӗпе аслӑ чыслӑхӗ пулса тӑрать тесе шутлаҫҫӗ. Балтика таврашӗнчи халӑхсен национальнӑй чаҫӗсем отечественнӑй вӑрҫӑ фрончӗсенче хӑюллӑн та паттӑррӑн ҫапӑҫрӗҫ, халӗ те ҫавӑн пекех ҫапӑҫаҫҫӗ. Балтика таврашӗнчи патриотсем нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ партизанла кӗрешӗве кунран кун вӑйлӑлатса пыраҫҫӗ, Балтика таврашӗнче нимӗҫсен тылне аркатаҫҫӗ, нимӗҫ оккупанчӗсене пӗтере-пӗтере тӑкаҫҫӗ. Германи захватчикӗсем партизанла движение хирӗҫ кӗрешме хӑтланаҫҫӗ. Вӗсем приказ кӑларнӑ, ҫав приказ тӑрӑх, партизан ӑҫта пурӑннине кӑтартса панӑшӑн 5 пин тенкӗ награда парса, каласа параканнин ятне вӑрттӑнра сыхласа усрама пулнӑ. Анчах та гитлеровецсен ҫавӑн пек хӑтланӑвӗсем ӑнӑҫлӑ пулса пымаҫҫӗ. Эстонецсем, латышсем, литовецсем хӑйсен ирӗклӗхне, никама пӑхӑнманлӑхне 30 кӗмӗл укҫашӑнах сутса ярас ҫук.

Таллин хулине паттӑррӑн хӳтӗлес ӗҫе вырӑнти ҫарпа тата тинӗс-ҫар флочӗпе пӗрлех Эстони партизанӗсен отрячӗсем те активлӑн хутшӑннӑ; ҫак кӗрешӳ ӗнтӗ Совет Союзӗнчи халӑхсен отечественнӑй вӑрҫин историйӗнче питӗ паллӑ страница ҫырса хӑварчӗ. Нимӗҫ захватчикӗсене Литвапа Латвири ӗҫсыннисем те хаяррӑн хирӗҫ тӑчӗҫ.

Отечественнӑй вӑрҫӑн геройӗсем хушшинче эпир Балтика таврашӗнчи ҫӗршывсен ывӑлӗсене те сахал мар куратпӑр. Вӗсем: латыш полк комиссарӗ Ульпе хӑйӗн полкӗпе нимӗҫсен колоннине аркатса тӑкса паттӑрсен вилӗмӗпе вилнӗскер; эстонец Мери Арнольд, Совет Союзӗн Геройӗ; партизанла отрядсен паттӑр руководителӗ литовец Симкнас; икӗ хут орден илнӗ эстонец, летчик Энгельс Пуссеп; латгалец Богомолов, нимӗҫ танкӗсем каҫакан кӗпере тӑшмана ӑн машинисемпе пӗрлех паттӑррӑн сирпӗнтерсе янӑскер; вӗсем — хӑйсен вӑй-халне шеллемесӗр паттӑррӑн кӗрешекен, нимӗҫсен фашистла ирсӗрӗсене пӗтере-пӗтере пыракан вуншар, ҫӗршер ытти геройсем.

Хӗрлӗ Ҫар Гитлерӑн йыткӗтӗвӗсене тӗпчипех пӗтерсе тӑкас вӑхӑта ҫывхартас тесе, Гитлер вӑхӑтлӑха чуралантарнӑ пур халӑхсем валли те ҫӗнӗ пурнӑҫ тумалли тапхӑра, мирлӗ творчествӑллӑ ӗҫ тапхӑрне ҫывхартас тесе, Балтика таврашӗнчи халӑхсем Совет Союзӗнчи мӗнпур халӑхсемпе юнашар тӑрса, пӗтӗм вӑйӗсене хурса кӗрешеҫҫӗ.

ЛИТВАРИ ОБЩЕСТВАЛЛА ДЕЯТЕЛЬСЕМ:

Балтушис Юозенас—писатель, **Юозас Банайтис**—писатель-композитор, **Юстас Палецкис**—литератор, **Петрас Цвирка**—писатель, **Людас Гира**—писатель, **Витаутас Гирдзияускас** — Вильнюс университечӗн профессорӗ, **Регина Янушкевичиене**—драматург, кинематографи искусствин деятелӗ, **Казе Кимонтайте**—Вильнюсри драма театрӗн артистки, **Ионас Крищунас**—Дотнувски ялхуҫалӑх академин ректорӗ-профессорӗ, **Ионас Марцинкевичус**—писатель, **Саломея Нерис** — поэтесса, **Позилас Пакарклис**—Вильнюс университечӗн профессорӗ, **Александра Сташкевичюсе** —государство опери солистки, **Ионас Шимкус**—писатель.

ЭСТОНИРИ ОБЩЕСТВАЛЛА ДЕЯТЕЛЬСЕМ:

Ханс Круус — Тарту университечӗн ректорӗ, **Иоганнес Барбарус Варес** — писатель, **Аугуст Якобсон** — писатель, **Нигол Андрезен** — писатель, **Юрий Куус**—Таллин политехникумӗн ректорӗ, **Ваабль**—профессор, **Аугуст Алле**—писатель, **Ян Карнер**—писатель, **Иоганнес Сентер**—писатель, **Эрик Адамсон**—художник, **Саннамес**—скульптор.

ЛАТВИРИ ОБЩЕСТВАЛЛА ДЕЯТЕЛЬСЕМ:

Кирхенштейн — профессор, **Андрей Упит**—писатель, **Вилис Лацис**—писатель, **Янис Ниедре** — писатель, **Янис Судрабкаунс** — писатель, **Герберт Ликумс**—художник, **Ольга Лепсиаунс**—артистка.

Выранти предприятисен пуҫарулӑхӗ тата оборона задачисем

Сталин юлташ вӑрҫӑн малтанхи кунӗсенчех пӗтӗм ӗҫе вӑрҫӑ вӑхӑтне тивӗҫлӗ пек урӑхлатса ҫӗнетме чӗнсе каларӗ. Ҫак чӗнӳ ҫине ответлесе, пирӗн социализмлӑ ҫӗршыв хӑйӗн ӗҫӗсене ҫӗнӗлле йӗркелесе ячӗ. Халӗ пирӗн пӗтӗм предприятисем фронта кирлӗ продукцие хӑвӑртрах тата ытларах туса кӑларассишӗн тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Тылри кашни рабочи, кашни работница, кашни ӗҫҫынни хӑйӗн пархатарлӑ ӗҫӗпе фронта пулӑшса тӑрать. Ҫӗршывӑн пур кӗтессисенче те вуншар пин предприятисем Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар Флотӗ валли хӗҫпӑшалсем тата боеприпассем тума тытӑнчӗҫ. Пысӑк предприятисенчен пуҫласа промартельсемпе мастерскойсем таранах пурте хӑйсен ӗҫне фронт ыйтӑвӗсемпе ҫыхӑнтарса туса пыма пуҫларӗҫ. Кая юлса пыракан предприятисем малта пыракансен опычӗсемпе ӗҫлеме вӗренеҫҫӗ, ҫамрӑк рабочисем пысӑк опытлӑ, квалификациллӗ рабочисенчен вӗренме тӑрӑшаҫҫӗ.

Совет патриочӗсем, рабочисемпе работницӑсем, инженерсем, техниксем, рационализаторсем хӑйсен пӗтӗм пӗлӗвне, мастерлӑхне оборона промышленноҫне вӑйлатас, фронта ытларах пулӑшас ӗҫсем ҫине хураҫҫӗ. Вӗсем ҫӗнтерӳ пирӗнтех пуласса татӑклӑн шанса тӑраҫҫӗ, мӗнпур вӑйсене мобилизацилесе Хӗрлӗ Ҫара пулӑшма тӑрӑшаҫҫӗ. Предприятисемпе заводсенче рабочисем ҫӗнӗ профессисене вӗренеҫҫӗ, кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫлесе, васкавлӑ заказсене срокчен пурнӑҫласа пыраҫҫӗ.

Пирӗн Чӑваш республикинчи предприятисем те фронта пулӑшас тӗлӗшпе пысӑк ҫитӗнӳсем тӑваҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен производствине фронт интересӗсене пӑхӑнтараҫҫӗ. Артельсенчи рабочисем ҫӗнӗ ӗҫсене хӑвӑрт хӑнӑхса пыраҫҫӗ, фронта кирлӗ продукцисене туса кӑларма вӗренеҫҫӗ. Сӑмахран, Комсомольски районри пӗр промартель мирлӗ вӑхӑтра йывӑҫран хуҫалӑхра кирлӗ вак япаласене туса кӑларнӑ пулсан, халӗ кунта фронта кирлӗ ҫиҫӗм йӗлтӗрсем тӑваҫҫӗ, ҫӗвӗ ҫӗлеҫҫӗ тата ытти те.

Ҫавӑн пекех Октябрьски районри промартель те фронта пулӑшас ӗҫре рабочисен пуҫарӑвӗпе чылай пысӑк ҫитӗнӳсем туса пырать. Артель уйрӑмӑнах вырӑнти ҫӗртаварсемпе усӑ курас ӗҫре лайӑх пример кӑтартать. Фронта кирлӗ пӗр заказа пурнӑҫлама кунта уйрӑм ҫурт лартмалла пулнӑ. Ҫав ҫурта лартма кирлӗ темиҫе пин кирпӗче тӑвас ӗҫе рабочисем хӑйсем ҫине илнӗ. Кирпӗч производствинче нихҫан ӗҫлемен ҫынсем ӗҫӗн технологи процесне хӑвӑрт вӗренсе ҫитнӗ. Кирлӗ ҫурта хӑвӑртрах туса лартнӑ. Халӗ вӗсем хӑйсен кулленхи ӗҫӗнче пулакан ҫӑм отходӗнчен Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли алшишлӗхе ҫыхса парас ӗҫе пуҫарса янӑ. Рабочисемпе работницӑсем ҫак ӗҫе смена пӗтнӗ хыҫҫӑн юлса ӗҫлеҫҫӗ. Артель 1941 ҫулта отходсемпе вырӑнти ҫӗртаварсенчен пурӗ 126.968 тенкӗлӗх продукци планран ирттерсе туса кӑларнӑ.

Республикӑри ытти промартельсем те мирлӗ вӑхӑтра нихҫан туман продукцисене пысӑк пахалӑхпа туса кӑлараҫҫӗ.

Вӑрҫӑ обстановкинче предприятисене кирлӗ ҫӗртаварсене вырӑнтах тупма тӑрӑшмалла. Пирӗн республикӑра предприятисене ӗҫлеме кирлӗ ҫӗртаварсем (йывӑҫ, сӳс-кантӑр, мунчала, пахча-ҫимӗҫ тата ыт. те) сахал мар. Ҫав ҫӗртаварсемпе туллин усӑ курма пӗлни кӑна кирлӗ.

Анчах пур ҫӗрте те мар ҫав пуянлӑхсемпе туллин усӑ курма тӑрӑшаҫҫӗ. Хӑйсен производствине ӳстерессишӗн чылай предприятисенче чӑн-чӑн совет хазяйственникӗ пек большевикла кӗрешсе пымаҫҫӗ. Ҫавӑн пек предприятисен шутне Канашри пищекомбинат кӗрет.

Вырӑнти промышленность предприятийӗсем, васкавлӑ заказсене пурнӑҫа кӗртнипе витӗнсе, культура таварӗсемпе куллен кирлӗ япаласене туса кӑлармa пӑрахаҫҫӗ. Ҫавна пула хӑшпӗр чух столовӑйсенче чашӑк-тирӗк, учрежденисенче клей, хуҫалӑхра супӑнь тата ытти ҫавӑн пек вак-тӗвек япаласем ҫитменни палӑрать. Халӗ пирӗн вӑл япаласене урӑх ҫӗртен кӳрсе килессе кӗтмелле мар, хамӑрӑн тума тытӑнмалла. Ку тӗлӗшпе вырӑнти промышленность работникӗсен пуҫарулӑхӗпе тавҫӑрулӑхӗ, активлӑхӗ тата вӗсем тӑрӑшни кирлӗ. Анчах чылай предприятисен, артельсемпе мастерскойсен руководителӗсен ҫак енӗсем курӑнмаҫҫӗ. Вӗсем, яланхи пек хускалмасӑр пурӑнма вӗреннӗскерсем, ҫӳлтен хушасса кӗтсе лараҫҫӗ.

Ҫавнашкал кая юлса пыракан предприятисене районри парторганизацисен ҫийӗнчех пулӑшу памалла. Вӗсен ӗҫне тӗрӗслесе тӑрса, малта пыракан предприятисемпе танлаштармалла. 1942 ҫулта промышленноҫӑн пур отраҫлӗсенче те вырӑнти ҫӗртаварсемпе туллин усӑ курса, Хӗрлӗ Ҫар валли, халӑх хуҫалӑхӗ валли кирлӗ таварсемпе продовольствисем ытларах туса кӑларассишӗн, производствӑна сарса пырассишӗн кӗрешмелле. Кая юлса пыракан пӗр предприяти те, пӗр артель те пулмалла мар. Предприятисенче, артельсенче пуҫарулӑх ҫуллӗ вырӑнта пулмалла. Харпӑрхӑйӗн предприятийӗнче е артельре фронт валли мӗн туса кӑлармa май пурри ҫинчен кашни руководитель, инженерӑн, рабочин шухӑшласа пӑхмалла. Ҫак тӗлӗшпе пашни кашни ҫӗнӗве тӗплӗн сӳтсе-явмалла.

Пӗтӗм совет халӑхӗ ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлесе, фронт ыйтӑвӗсене хӑвӑрт пурнӑҫлас, хамӑрӑн ҫӗршыва хӳтӗлекен Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар Флотне ытларах та ытларах хӗҫпӑшал туса парас, нимӗҫ захватчикӗсене пӗр ҫын юлмиччен пӗтерсе тӑкас шухӑш-кӑмӑлпа пурӑнать. Предприятисенчи, фабрикӑсемпе заводсенчи рабочисен кашни ҫӗнӗ ҫитӗнӗвӗ тӑшмана ҫӗнӗ вӑйпа тырса ҫапать. Ҫавӑнпа та пирӗн вырӑнти ресурссене пӗтӗмпех тӑшмана пӗтерсе тӑкас ӗҫре яма тӑрӑшас пулать.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Хӗрлӗ Ҫарӑн сывлӑш-ҫар вӑйӗсен начальство составне орденсемпе наградӑласси ҫинчен

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳ фронтӗнче Командованин боевой заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн тата ҫак ӗҫре хӑюлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн ҫаксене наградӑлас:

ХӖРЛӖ ЯЛАВ ОРДЕНӖПЕ

1. Старший лейтенанта Александр Димитриевич **Волкова**.
2. Старший лейтенанта Александр Степанович **Гайворонские**.
3. Старший лейтенанта Алексей Иванович **Линева**.
4. Капитана Константин Арсеньевич **Столярова**.

ХӖРЛӖ ҪӐЛТӐР ОРДЕНӖПЕ

1. Сержанта Константин Иванович **Костылева**.
2. Сержанта Василий Петрович **Каренина**.
3. Сержанта Иван Михайлович **Павловича**.
4. Сержанта Вениамин Андреевич **Чернова**.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль, 1942 ҫулти январӗн 22-мӗш.

Хӗрлӗ Ҫарӑн начальство составне орденсемпе наградӑлани

Хӗрлӗ Ҫар Командованийӗ Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсемпе соединенийӗсене туса йӗркелесе хушнине кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн СССР Верховный Совет Президиумӗ Хӗрлӗ Ҫарӑн начальство составӗнче тӑракансен группине орденсемпе наградӑланӑ.

Ленин орденӗпе:

1. Армин пӗрремӗш рангри комиссарне Ефим Артемьевич **Щаденкона**,
2. Генерал-полковника Павел Артемьевич **Артемьева**,
3. Генерал-лейтенанта Никифор Васильевич **Медведева** наградӑланӑ.

Хӗрлӗ Ялав орденӗпе 11 ҫынна,

Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗпе 15 ҫынна наградӑланӑ. (ТАСС).

Ҫуракине хатӗрленнине тӗрӗслеҫҫӗ

СЕНТӖР (телефон тӑрӑх). Районри халь колхозсем ҫуракине мӗнле хатӗрленнине тӗрӗслеме тытӑнчӗҫ. Январӗн 20-мӗш тӗлне пурӗ 51 колхоза тӗрӗсленӗ. Тӗрӗслӳ нумай колхозсем ҫуракине тӗплӗн хатӗрленсе пынине кӑтартать. Сӑмахран, Калаткасси ялӗнчи «Безбожник» колхоз ҫуракине хатӗрленсе ҫитнӗ темелле. Ялхуҫалӑх машинисемпе инвентарӗсене колхоз юсаса ҫитернӗ. Уя 1000 лав тислӗк кӑларнӑ. Вӑрлӑхсем те ҫителӗклӗ, сортланӑ. Ҫуракине хатӗрлесес тӗлӗшпе уйрӑмӑнах комсомолецсемпе вӗсен организаторӗ В. Измайлова тимлесе ӗҫлеҫҫӗ.

Тӗрӗслӳ ҫуракине ҫителӗклӗ таран хатӗрленмен колхозсене те палӑртрӗ, вӗсене авана хатӗрленме хускатрӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Январӗн 22-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Январӗн 22-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем Хӗвеланӑҫнелле куҫса пынӑ. Пирӗн чаҫсем халӑх пурӑнакан темиҫе пункта, вӑл шутра **Уварово** хулине (Мускав облаҫӗнчи район центрӗ), йышӑнса илнӗ.

Январӗн 21-мӗшӗнче нимӗҫсенне 15 самолет пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн 4 самолет пӗтнӗ.

Январӗн 22-мӗшӗнче Мускав патӗнче нимӗҫсенне 5 самолет персе антарнӑ.

* * *

Январӗн 21-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаҫӗсем нимӗҫсен 10 танкне, пехотӑпа грузсем турттарса пыракан 850 автомашинине, боеприпассем тиенӗ 550 ытла лавне, 32 орудине прислугисемпе пӗрлех, зенитнӑй пулеметсен 10 точкине пӗтерсе тӑкнӑ, чугунҫул ҫинчи 35 вагона ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, чугунҫул ҫинчи 11 эшелона вут тивертсе янӑ, боеприпассен складне тата горючи тултарнӑ икӗ склада сирпӗнтерсе янӑ, противникӑн пехотине 5 полка ҫити тата утлӑ ҫарӑн 3 эскадронне сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн часть противника халӑх пурӑнакан пӗр кирлӗ пунктран хӑваласа кӑларнӑ, противникӑнне 60 автомашина, 40 мотоцикл, 16 тӗрлӗрен оруди, 2 самолет, 200 пичке бензин, стрелковӑйпа интендантски снаряженин склачӗсемпе ытти трофейӑсем тытса илнӗ. Тепӗр участокра пирӗн боецсем нимӗҫсенне 5 танк, 8 оруди, 38 автомашина, 200 велосипед, 8 пулемет, 5 миномет тата чакса пыракан противника хирӗҫ ҫапӑҫса урӑх тӗрлӗ хӗҫпӑшал та нумай тытса илнӗ.

* * *

Ленинград фрончӗн участокӗсенчен пӗринче пирӗн танковӑй часть 3 кун хушшинчи ҫапӑҫусенче нимӗҫсенне 10 танк, 3 вездеход, 10 оруди пӗтерсе тӑкнӑ тата 7 блиндаж аркатнӑ. Пирӗн чаҫӑн танкисчӗсем ӑнӑҫуллӑ кӗрешнипе пула нимӗҫсем ҫав ҫапӑҫусенче хӑйсен салтакӗсемпе офицерӗсене 250 ҫынна ҫухатнӑ.

* * *

К. ялшӑн пынӑ ҫапӑҫура лейтенант Разумов юлташ пилӗк красноармеецпа пӗрле пӗр сарай патне станковӑй пулемет лартнӑ та ялта вырнаҫнӑ нимӗҫсем ҫине 16 сехет хушши персе тӑнӑ. Ҫак хӑюллӑ та паттӑр боецсем йышӑнса тӑракан позици ҫине фашистсем хӑйсен 3 вӑтам танкне янӑ. Разумов лейтенант хушнипе Орловпа Галактинов красноармеецсем противник пӑрахса хӑварнӑ пӗр противотанковӑй орудине сарай патне туртса пынӑ та ҫавӑнтах орудирен пеме пуҫланӑ, тӗл пенипе противникӑн малта пыракан машинине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, ыттисем каялла ҫавӑрӑнса кайнӑ.

* * *

Калининри партизансен Т. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячӗ нимӗҫсен автоколоннине ҫапса аркатнӑ. Ҫар пурлӑхӗ турттарса пыракан 5 автомашинӑна пӗтерсе тӑкнӑ тата нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 22 ҫынна вӗлернӗ.

* * *

Пирӗн чаҫсем нимӗҫсен 26-мӗш пехотнӑй дивизийӗн санитари чаҫӗ подразделенисен командирӗсем патне янӑ вӑрттӑн ҫырӑва тытса илнӗ. Ҫав документ гитлерла салтаксем нумайӑшӗсем халсӑрланса ҫитнине тата вӗсен шухӑш-кӑмӑлӗсем пӑсӑлса кайнине аван кӑтартса парать. Ҫав вӑрттӑн ҫыруран илнӗ уйрӑм сыпӑксене пичетлетпӗр:

«Юлашки вӑхӑтра дивизин санитари чаҫне питех те халран кайнӑ салтаксем нумай пыра пуҫларӗҫ. Ҫав начарланса ҫитнӗ стрелоксем салтак пулма пултараймаҫҫӗ, вӗсем шухӑшкӑмӑл енчен те, вӑй-хал енчен те юрӑхсӑра тухнӑ. Ҫакӑ тӳрех куҫа курӑнса каять: вӗсемшӗн йӗри-тавра кирек мӗн пулса иртсен те пурпӗрех, вӗсен пур туйӑмӗсем те мӑкалса ҫитнӗ. Вӗсен сӑн-сӑпачӗ ҫын йӗркинчен пачах тухнӑ. Тасалӑх енчен чи кирлӗ, ҫӑмӑл правилӑсене те вӗсем пачах та пӑхӑнмаҫҫӗ, тула тухас пулсан та хӑйсем айнех яраҫҫӗ. Ҫавӑн пек хӑтланнине час-часах симуляци тӑваҫҫӗ тесе ӑнланма пулать. Анчах ҫапах та ҫав чирӗн паллисем ҫине начальниксен ҫавӑрӑнса пӑхмалла».

* * *

Можайск хулинче тӑнӑ хушӑра гитлеровецсем культура ҫуртне аркатса тӑкнӑ, вырӑнти краеведени музейӗн экспоначӗсене пурне те ҫаратса кайнӑ, хула библиотекинчи тем пек хаклӑ кӗнекесене нумай пин экземпляр шкафсенчен кӑларса ывӑтнӑ, ҫунтарса янӑ, гидростанци ҫуртне тата хула кинотеатрне сирпӗнтерсе янӑ. Нимӗҫсен фашистла варварӗсем Можайскри Николаевски соборӑн ҫуртне, вырӑс архитектурин чи авалхи памятникӗ пулса тӑраканскерне, ишӗлтернӗ, Бородино салине унпа пӗрлех тата Бородинори чи паллӑ та паха музея вут тӗртсе йӑлтах ҫунтарса янӑ, вырӑс халӑхӗн ҫавӑнти хаклӑран та хаклӑ нациллӗ реликвийӗсене пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Лениногорск рудникӗнчи бурильщик (Казахстан) Георгий Хандин пӗр сменӑри нормӑна 2300 процент тултарнӑ. Сокольнӑй рудникӗнчи бурильщик Сергей Худаков январӗн 17-мӗшӗнче сменӑри нормӑна 3475 процент тултарнӑ.

Январӗн 23-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Январӗн 23-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем нимӗҫсен фашистла войскисене хирӗҫ активлӑн ҫапӑҫнӑ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн часть пӗр кун хушшинчи ҫапӑҫусенче халӑх пурӑнакан 3 пункта ирӗке кӑларнӑ, противникӑнне 7 пулемет, 5 миномет тата боеприпассем турттарса пыракан 12 автомашинӑна тытса илнӗ. Гитлеровецсен салтакӗсемпе офицерӗсене 250 ҫынна вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Макарьев юлташӑн чаҫӗ халӑх пурӑнакан С. пункта йышӑннӑ чухне противникӑнне 4 оруди, 5 автомашина, 40 велосипед, 4 пулемет, боеприпассемпе продовольстви питӗ нумай тытса илнӗ.

* * *

Кӑнтӑр фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн боецсем халӑх пурӑнакан темиҫе пункта нимӗҫсенчен ирӗке кӑларнӑ. Трофейӑсем: 13 оруди, 17 пулемет тата снарядсем нумай тытса илнӗ. Ҫапӑҫу хирӗнче противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсен 150 вилли выртса юлнӑ.

* * *

Красноармеец Малагин юлташ тӑшманӑн танкисене хирӗҫ пемелли орудийӗ патне систермесӗр шуса пынӑ та граната пӑрахса, оруди расчетне пӗтерсе тӑкнӑ. Унтан паттӑр боец нимӗҫсем йышӑннӑ ялта пырса кӗнӗ те 40 нимӗҫ салтакӗ вырнаҫнӑ ҫурт ҫине граната пӑрахнӑ. Гитлеровецсем ҫуртран сиксе тухма тытӑннӑ. Паттӑр боец вӗсем ҫине пеме пуҫласа нимӗҫсен 30 салтакне вӗлернӗ.

* * *

С. юлташӑн отрядӗнчи Ленинград партизанӗсем засадӑна пытанса ларнӑ та нимӗҫсен обозне атакӑланӑ. Хӑйсем ҫине тапӑнасса кӗтмен нимӗҫ салтакӗсем хӑраса ӳксе тарма тытӑннӑ. Партизансем грузсем турттарса пыракан 15 лава тытса илнӗ тата нимӗҫсен 16 салтакӗпе 2 офицерне вӗлернӗ.

* * *

Нимӗҫсен 131-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 434-мӗш полкӑн 11-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ ефрейтор Отто Наумен ҫапла каласа панӑ: «Октябрӗн 2-мӗшӗнче, урӑхла каласан, Гитлер юлашки татӑклӑ ҫапӑҫу пуҫлани ҫинчен пӗлтернӗ кун, пирӗн ротӑра 180 ҫын пулнӑ. Халӗ 54 ҫын ҫеҫ тӑрса юлнӑ. Полкӑн ытти подразделенийӗсем те ҫакӑн пекех пысӑк ҫухатусем тӳснӗ. Октябрь уйӑхӗнчен пуҫласа 11-мӗш ротӑра 4 командир улшӑнчӗ. Хэйор лейтенанта, Шухард лейтенанта, Монтрэ лейтенанта ҫапӑҫура пирӗн хыҫҫӑн тепӗрне вӗлерчӗҫ. Халӗ ротӑра фельдфебель Гельмрайт командир пулса тӑрать. Полкра тӑм илнине суйӑрланнисем те,

Малалли 2-мӗш страницӑра

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 23-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

çавнашкалах тата сывмаррисем те питĕ нумай».

* * *

Нимĕçсен 131-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 432-мĕш пехотнăй полкăн 8-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ Антон Зазуля çапла каласа панă: «Эпĕ хам поляк, çавăнпа та Германи çарĕнчи хамăн службăна чи усал тыткăн вырăнне хуратăп. Гитлеровецсем манăн тăван çĕршыва чуралантарса татăкăн-татăкăн вакласа пĕтерчĕç. Польшăра халĕ ĕнтĕ çамрăксем çук та. Пĕрисене—нимĕçсем тĕрмесемпе концентрациллĕ лагерьсене хупса лартрĕç, теприсене—персе пăрахрĕç. Юлашкисене Германие каторгăри ĕçе хăваласа кайрĕç. Манăн 17 çулти йăмăка Германие илсе кайрĕç. Вăл мана: питĕ йывăр асап тӳссе пурăнатăп, час-часах макăратăп, тесе çырса пĕлтернĕччĕ».

* * *

Гамбургра тата Германири ытти хуласенче те магазинсенче темиçешер кун хушши нимĕнле продуктсем те пулмасçĕ. Вуншар çынсем выçăпа асапланса вилеççĕ. Январĕн 19-мĕшĕнче Гамбургри халăха магазинсене продуктсем илсе килнĕ тесе пĕлтернĕ. Вуншар пин хĕрарăмсем магазинсене кайнă та унта пушă çӳлĕксем çеç курнă. Тарăхса кайнă халăх нумай магазинсене çĕмĕрсе пĕтернĕ. Влаçсем нумай çынсене арестленĕ.

* * *

Тбилисири Куйбышев ячĕпе тăракан заводра ĕçлекен мастер Месхи юлташ рационализаторла сĕнӳ панă. Çак сĕнĕве пурнăçа кĕртни тăватă çын тăвакан ĕçе пĕччен туса пыма май парать. Батумири Берия ячĕпе тăракан заводра ĕçлекен Бойко юлташ станок çумне хăй тунă хатĕре хушнă та пĕр йышши детальсем туса кăларассине виçĕ хут ӳстернĕ.

—o—

Хĕрлĕ Çар валли аш-какай хатĕрлеççĕ

ÇĔРПУ. Елаш ялсоветне кĕрекен «Елаш», «Парижская Коммуна» тата «Октябрь» колхозсенчи колхозниксемпе колхозницăсем, «Цивильстрой» колхоз пуçарăвне ырласа, Хĕрлĕ Çар валли 19 сурăх, 5 сысна тата 142 чăх-чĕп çитĕнтерсе самăртса пама пулчĕç. Уйрăмăн илсен, «Октябрь» колхозри колхозниксем: А. Егоров, С. Кузьмина, Микушкин, Гаврилов, Михайлов, Афанасьева, Ф. Долгов, Егоров, Назаров — пĕрер сурăх, Борисов, П. Петров, И. Петров— пĕрер хур самăртса параççĕ. **Г. П.**

—o—

Çар ĕçне тимлĕн вĕренеççĕ

Советскинчи вăтам шкулти учительсем вĕренӳ программине çар ĕçĕпе сыхăнтараççĕ. Кунта вĕренекенсем сывлăшран килсе тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланма, винтовкăна усă курма аван пĕлеççĕ. Аслă классенче вĕренекенсем пурте ПВХО нормине парса çитерни. Нумаях пулмасть ПВХО значокĕсене илчĕç. Кунта уйрăмăнах военрук Кузьмин юлташ тăрăшса ĕçлет. Шкулта медсестрасем хатĕрлес ĕç аван пырать.

Çар ĕçне вĕренмелли занятисем эрнере икĕ хут, 110 сехетлĕ программăпа йĕркеллĕн пулса пыраççĕ. Халĕ ачасем противогазпа усă курма, винтовкăн, талкăн, ручной пулеметăн чăрĕсене вĕренеççĕ. Вĕренекенсен винтовка, граната макечĕсем пур. Ачасем занятисене пĕр сиктермесĕр çӳреççĕ.

И. Константинов, А. Васильев, Павлов çар ĕçне уйрăмах тăрăшса вĕренеççĕ. Павловăн кăкри çинче тăватă оборона значокĕ. Халь ачасем йĕлтĕрпе çӳреме вĕренеççĕ. Çак кунсенче 20 километрлă поход туса ирттерме хатĕрленеççĕ. **В. АНДРЕЕВ.**

Америка хаçачĕсем Хĕрлĕ Çар Можайск хулине илни çинчен мĕн çыраççĕ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 22-мĕш. (ТАСС). Америка хаçачĕсем Хĕрлĕ Çар Можайск хулине йышăнни çинчен пĕлтерекен хыпара шултăра заголовоксемпе пичетлесе кăларнă. «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат çав хыпара 1-мĕш страницăра çапла заголовок парса пичетленĕ: «Хĕрлĕ Çар Можайск хулине йышăннă. Вырăссем нимĕçсен чакакан çарне хăваласа пыраççĕ». «Дейли миррор» хаçатра çапла çырнă: «Вырăссем Можайск хулине йышăнса илнĕ те малалла çĕнтерсе пыраççĕ», тенĕ. «Вашингтон пост» хаçат çапла çырать: пур паллăсем тăрăх та, нимĕçсем вырăссен наступленине хирĕç вăйлăн тăрса çапăçаççĕ, анчах та юлашки ĕçсем каллех нимĕçсен планĕсене ӳпĕнтерчĕç, Германи çарне çĕнтерме çук текен юмаха тĕппипех пĕтерсе лартрĕç. Нимĕçсем çынсем тĕлĕшпе те, материалсем тĕлĕшпе те пит пысăк çухатусем тӳсеççĕ. ССР Союзне хирĕç пуçласа янă вăрçă Германин экономикипе транспортне питех те хавшатса çитерни, çавăн пекех тата Германи халăхĕн шухăш-кăмăлне те пусарса лартнă.

Нимĕç генералĕ Гудериан чирлесе ӳкнĕ

Швейцарирен килнĕ хыпарсем тăрăх, Гудериан генерал ӳпке шыçнипе чирлесе ӳкнĕ. Гудериан генерал Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче Германи çарĕн танковăй чăçĕсен пысăк соединенийĕн командирĕ пулнă. Ăна фронтран каялла чĕнсе илесси çинчен хыпарсем саралма пуçланăранпа чылай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ. Германи çарĕсем Совет Союзĕн фронтĕнче поражени тӳснипе Гудериан генерал та айăпа кĕрсе ӳкнĕ. (ТАСС).

Нимĕçсем хăйсен Норвегири войскисене Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне куçараççĕ

ЖЕНЕВА, январĕн 22-мĕш. (ТАСС). «Базлер нахрихтен» хаçат Стокгольмран çапла пĕлтерет: нимĕçсем хăйсен войскисене Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне ямашкăн Норвегирен каялла илсе тухаççĕ. Норвегире тăракан кадровăй чаçсене ватă салтаксенчен пухнă çĕнĕ чаçсемпе улăштараççĕ.

Францире заложниксене персе пăрахаççĕ

СТОКГОЛЬМ, январĕн 22-мĕш. (ТАСС). «Дагенс нюхетер» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 29-мĕшĕнче Дижонра Германи офицерне вĕлерекен çынсене тупайман. Çав ĕçе тăваканнисене тытса панăшăн Германин оккупациллĕ влаçĕсем миллион франк тӳлеме пулни те пулăшу парайман.

Çакăн пирки ĕнтĕ нимĕçсен Дижон хулин коменданчĕ оккупациллĕ влаçсем французсен 10 заложникне вĕлерни çинчен пĕлтернĕ. Кунсăр пуçне тата 4 француз çыннине, закона хирĕç кайса хĕçпăшал тытса усранăшăн айăпласа, персе вĕлернĕ.

Çар ĕçĕ валли хушса укçа парасси çинчен Рузвельт панă сĕнӳ

ВАШИНГТОН, январĕн 22-мĕш. (ТАСС). Вăрçă ĕçĕ валли бюджетăн çак çулĕнче тата тепĕр çулĕнче 28 миллиард та 501 миллион доллар укçа хушса парасси çинчен Рузвельт конгреса сĕнӳ тăратнă (Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче бюджет çулталăкĕ июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçланать. Рузвельт бюджетăн çак çулĕнче çар валли 12.526 миллион доллар, вăл шутран 9 миллиард доллар ытларах авиаци валли пама ыйтать. Малалла Рузвельт çар флотне бюджетăн кăçалхи çулĕнче 8.769 миллион доллар, бюджетăн çитес çулĕнче 7.194 миллион доллар пама ыйтать.

Америкăри çĕршывсен конференцийĕнче

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 22-мĕш. (ТАСС). Америкăри хаçатсем Рио де Жанейăран илнĕ пĕлтерӳсенче çапла кăтартса панă: Аргентина, Чили, Перу, Бразили тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен представителĕсем тĕнĕл держависемпе дипломатиллĕ сыхăнусем тытма пăрахасси çинчен резолюци йышăнасси пирки калаçса татăлнă. Аргентина правительстви халĕ ĕнтĕ çав резолюцие официальнăй йĕркепех ырланă.

Конференцире Чили представителĕ те резолюцие ырланă. Резолюцие халĕ ĕнтĕ Чили правительствин пăхса тухмалла. Чили правительстви резолюцие ырлать пуль, тесе шутлаççĕ.

Çавнашкалах тата резолюци малтанах йышăнса хунă принципа пур çĕршывсем те пăхăнса пырасси çинчен тепĕр хут асăнса хăварнă. Çав принцип тăрăх, Америка тулашĕнчи пĕр-пĕр çĕршыв Америкăри пĕр-пĕр çĕршыв çине тапăннине Америкăри пур республикăсене те хирĕç туса пыракан агресси вырăнне хураççĕ. Çавнашкалах резолюци пĕтĕмĕшле сыхлăха тытса тăрас тĕллевпе 21 çĕршыв та пĕр-пĕринпе килĕшсе татăклăн ĕçлеме хатĕррине кăтартса парать.

Америкăри çĕршывсем тĕнĕл держависене хирĕç

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 22-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Рио де Жанейăран çапла пĕлтерет: авторитетлă учреждениесенче илнĕ хыпарсем тăрăх пан-Америка конференцине пухăннă Америкăри мĕнпур çĕршывсен представителĕсем, вăл шута Аргентина та кĕрет, тĕнĕл держависемпе сыхăну тытассине пĕтерме йышăнакан деклараци ырлама килĕшнĕ.

Пан-Америка конференцийĕн оборона ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комиссийĕ — тĕнĕл держависем оккупациленĕ çĕршывсене пулăшма йышăннă резолюцие пĕр шухăш-кăмăллă пулса ырланă.

Гитлеровецсене хирĕç çапăçма

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 22-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германири католик çамрăкĕсен движенийĕн руководителĕ пулнăскер Нью-Азра (Огайо штачĕ) çакăн пек тухса каланă: эпĕ çак сывăх вăхăтрах, — тенĕ вăл, — Америка правительствинчен мана пĕр ирĕк пама ыйтасшăн. Çакă вăл — мана Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче пурăнакан çамрăк нимĕçсенчен «Ирĕклĕх легионĕ» тума ирĕк парасси. Вăл легиона гитлеровецсене хирĕç çапăçасшăн çунакан çамрăк нимĕçсем сахалтан та 35.000 çын таран кĕрĕччĕç,— тенĕ.

Ливири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, январĕн 22-мĕш. (ТАСС). Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи вăйĕсен командованийĕ кăларнă черетлĕ коммюникере çапла каланă: ĕнер ним те курмалла мар япăх çанталăк тăнипе усă курса, противникăн вăйлă 3 колонни, нимĕçсен мĕнпур тăрса юлнă танкĕсем пулăшнипе, Мирс—Брегран кăнтăралла каякан тĕп линирен хĕвеланăçнелле 10 миля таран шалалла кĕрсе кайнă. Çакна ăна разведка тăвас шухăшпа тунă пулмалла. Противника вăл Аджедабирен чакса кайнă вăхăтранпах чăрмав кӳрсе тăракан Англин пысăк мар вăйĕсем кăштах каялла чакнă. Вĕсем кун каçиччен тăшман войскисемпе тытăçса, тăшмана çухатусем кӳнĕ. Начар çанталăк Англин сывлăшри вăйĕсене каллех вăйлăн чăрмантарса тăнă.

—o—

Тăван çĕршыва хӳтĕлекенсене— ăшă тумтирсем

КУКЕÇ. Шупашкар районĕнчи колхозсенче Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕç çĕнĕрен вăйлăн пуçланса кайрĕ. Шĕнерпуçĕнчи «Çиçĕм» колхоз членĕсем çак иртнĕ кунсенче В. М. Молотов юлташăн нотине вуласа тухрĕç. Пухури колхозниксем пурте пĕр шухăш-кăмăллă пулса, нимĕç оккупанчĕсене хăвăртрах пĕтерсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшас шутпа ăшă тумтирсем пама йышăнчĕç. Т. Иванов колхозник пĕр тир тата пĕр мăшăр çăм алшиш пачĕ.

Хыркасси ялсовечĕн председателĕ Н. Васильев юлташ — çĕнĕрен çур килограмм çăм, пĕр мăшăр носки, пĕр тир, «Чашлавар» колхозри колхозница, красноармеец арăмĕ А. Горелова— пĕр тир, пĕр мăшăр çăматă, çĕлĕк пачĕç.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе учительсем активлăн хутшăнаççĕ. Кӳкеç вăтам шкулĕнчи учительница Елизарова юлташ малтан пĕр мăшăр çăматă тата носки панă пулнă, халĕ пĕр тир тата пĕр мăшăр çăм алшиш пачĕ. Надеждина юлташ та малтан пĕр мăшăр çăматă, 2 мăшăр çăм носки, пĕр мăшăр алшиш, портянка тата 2 тир панă, халĕ вăл татах çур килограмм çăм пачĕ.

А. ТИМОФЕЕВ.

ВĂРМАР (телефонпа). Районри ĕçсыннисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухаççĕ. 1942 çулăн малтанхи икĕ эрни хушшинче районĕпе пурĕ 482 тир тата кĕрĕк пиншаксем, пĕр тăлăп, 32 килограмм çăм, 16 мăшăр çăматă, 14 çĕлĕк, 8 мăшăр ватка пусса тунă шалавар тата ыттисем те пухса панă. Куденер колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсене çĕнĕрен 6 мăшăр çăматă, 15 тир, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 2 кĕрĕк пиншак, 3 мăшăр çăматă т. ыт. те пухса панă.

КРЮЧКОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Вĕренӳ çулĕн иккĕмĕш чĕрĕкĕнчи ĕçсем

ЭЛЕК. Шкулсем вĕренӳ çулĕн иккĕмĕш чĕрĕкне вĕçлесе виççĕмĕш чĕрĕкне куçрĕç. Халĕ ĕнтĕ туса ирттернĕ ĕçсен хăшпĕр итогĕсемпе паллашма пулать.

Районра пурĕ 36 шкул. Вĕсенчен вăтам шкулсем—4, туллимар вăтам шкулсем—14 тата пуçламĕш шкулсем—18 шутланаççĕ. Фашистла бандитсем пирĕн çĕршыв çине вăрă-хурахла килсе тапăнсан, чылай учительсем тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе телейне сыхлама фронта тухса кайрĕç.

Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче 135 класпа 120 учитель ĕçленĕ. Кăçал 138 класра 111 учитель ĕçлет. Çапах та Хĕрлĕ Çар ретне тăнă учительсен класĕсем пушă лармаçç. Иккĕмĕш чĕрĕкре районри 26 учитель иккĕшер класпа ĕçленĕ; пĕр учитель, О. Макарова юлташ (Пиçенер шкулĕ), пĕччен виçĕ класра вĕрентнĕ.

Наукăпа культурăн никĕсĕсене ишĕлтерекен фашистсене хирĕç пирĕн пĕтĕм халăхăн тарăхăвĕ çĕкленчĕ. Ватă çынсен чĕрисем çамрăк вăй-халпа тапма тытăнчĕç, çамрăк ачасен вăй-халĕ иксĕлми çĕкленӳпе хăстарланчĕ.

Куракăшри пуçламĕш шкулта ĕçлекен учитель П. Ф. Быков юлташ 64 çулта. Ытти вĕренӳ çулĕсенче вăл пĕрер класпа çеç ĕçленĕ. Фашизма хирĕç вăрçă пуçланнă хыççăн Быков юлташ, хăйĕн ваталăхне пăхмасăр, икĕ класпа ĕçлеме тытăнчĕ.

Фашизм пирĕн социализмлă наукăпа культурăна тата наукăпа культура работникĕсене чуралăх сăнчăрĕпе сăнчăрласшăн. Пирĕн правительство наукăпа культурăн представителĕсене, культурăпа наукăна аталантарассишĕн кĕрешекенсене, фашизм тыткăнне лекесрен хăтарас тесе, çĕршыв варринелле эвакуацилерĕ. Эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ учительсем те халь шкулсенче пысăк ĕçсем тăваççĕ.

Акă А. П. Эряковская юлташа илер. Вăл 30 çул хушши халăх учителĕ пулса ĕçленĕ. Юлашки икĕ çул хушшинче вăл шкулта ĕçлемен, пенси илсе пурăннă. Фашизма хирĕç отечественнăй вăрçă пуçланнă хыççăн, ватă пулин те, вăл каллех шкул ĕçне хутшăнчĕ. Халĕ вăл Вырăс Сормĕнчи вăтам шкулта икĕ класра ĕçлет.

Чылай шкул ачисен пиччĕшĕсемпе ашшĕсем фашистла вăрă-хурахсене хирĕç фронтра çапăçаççĕ. Тылри условире вĕренекен ачасем фронтри пиччĕшĕсемпе ашшĕсене пур майпа та пулăшассишĕн тăрăшаççĕ. Шкулта «отлично» тата «хорошо» паллăсемпе вĕренсе пыраççĕ. Районри шкулсенче пурĕ 5477 ача вĕренет, вĕсенчен 1334 ача вĕренӳ çулĕн иккĕмĕш чĕрĕкне «отлично» тата «хорошо» паллăсем илнипе вĕçлерĕç.

Паянхи шкул ачисем ыран фронтри боецсем пулма хатĕрленеççĕ. 1942 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне районри 16 шкулта вĕренекенсенчен 942 ача, ПВХО значокĕн пĕрремĕш ступеньлĕ нормисене парса, значоксем илнĕ. Вăл шутран Ураскилтри туллимар вăтам шкулта вĕренекен 290 ача пурте ПВХО значокĕн нормисене панă, значоксем илнĕ. Çавăн пекех Вырăс Сормĕнчи вăтам шкулта вĕренекенсенчен 213 ача, Йӳçкассинчи вăтам шкулта вĕренекенсенчен 209 ача ПВХО значокĕн пĕрремĕш ступеньлĕ нормисене панă.

Иртнĕ çулти декабрĕн 22-мĕшĕнчен пуçласа, 8—10-мĕш классенче вĕренекенсем всевобуч йĕркипе çар ĕçне вĕренме тытăнчĕç. Пур шкулта та 8—10-мĕш классенче ПВХО кружокĕсем ĕçлеççĕ. Ачасене çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе вырăнти пĕçĕн командирсене, врачсене, фельдшерсене тата ытти специалистсене те явăçтарнă.

Шкулта вĕреннипе пĕрлех ачасем колхоз производствине те хутшăнса ĕçлеççĕ. 20 шкулти учительсемпе вĕренекенсен вăйĕпе иртнĕ уборкăра 137 гектар çинчи тырра пуçтарса кĕртнĕ, 13 гектар çĕр çинчен çĕрулми кăларнă, 216 центнер авăн çапнă, çав ĕçре пурĕ 4913 ĕçкунĕ тунă. Çав ĕçкунĕсемшĕн тивекен тырра пĕтĕмпех оборона фондне панă.

Учительсемпе шкул ачисем пур майпа та çĕршыв оборонине тĕреклетессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

«Комсомол Чувашии» бронепоезда тума учительсемпе шкул ачисен коллективĕ 3.309 тенкĕ укçа пухнă. Йӳçкассинчи вăтам шкулта кăна бронепоезд валли 1032 тенкĕ пухса панă.

Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе учительсемпе шкул ачисем пысăк активлăх кăтартнине палăртмалла. Пĕр Ураскилтри туллимар вăтам шкулта кăна Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 12 тир, 2 килограмм çăм, 3 ăшă кĕпе, 7 алшăлли тата ытти ăшă япаласем те пухса панă.

Вĕренӳ çулĕн виççĕмĕш чĕрĕкĕн пуçламĕшĕнченех 7—10-мĕш классенче вĕренекенсем ялхуçалăх ĕçне вĕренме тытăнаççĕ. Ку тĕлĕшпе вăтам шкулсем çумне пысăк квалификациллĕ специалистсене явăçтарнă. Туллимар вăтам шкулсенче ялхуçалăх ĕçне вĕрентме биологсене хушнă.

Виççĕмĕш чĕрĕкре шкул ачисем «отлично» тата «хорошо» паллăсемпе вĕренсе пынипе пĕрлех ялхуçалăх ĕçĕнче те лайăх ĕçлекен кадрсем пулма, çакăнпа пĕрлех хăюллă та шиксĕр боецсем пулма хатĕрленеççĕ.

М. ЯСТРАН.

ФЗО шкулне вĕренме каяççĕ

ШĂХАСАН. Районри çамрăксем ФЗО шкулне вĕренме каяс, пĕр-пĕр специальность илсе тăван çĕршыв валли ĕçлеме тытăнас кăмăлпа çунса тăраççĕ. Январĕн 16-мĕшĕнче темĕн чухлĕ çамрăк райсовет исполкомĕ умне пухăннă. Хăйсем пурте савăнăçлă. Вĕсем—ФЗО шкулне вĕренме каяс текенскерсем. Хăйсен сывлăхĕсене комиссие пăхтарма черетленсе тăнă.

9 сехетре комисси ĕçлеме тытăнчĕ. Чи малтан комиссие яштак пӳллĕ, илемлĕ ача, Шăхасанти «Хĕрлĕ октябрь» колхоз членĕ Илья Ерников кĕчĕ.

— Манăн пичче улттăмĕш çул ĕнтĕ Хĕрлĕ Çарта. Халь вăл фронтра фашистсене хирĕç çапăçать. Манăн ФЗО шкулĕнчен вĕренсе тухса, пĕр-пĕр специальность илсе, пиччене, Хĕрлĕ Çара татах та ытларах пулăшас килет,—тет çамрăк Илюша, хăйне комисси членĕсем ФЗО шкулне вĕренме кайма пултаратăн тенипе савăнса.

Ерников хыççăн коридорта кĕтсе тăракан çамрăк ачасем пĕрин хыççăн тепри комиссире пулчĕç. Çав комисси 21 ачана ФЗО шкулне вĕренме кайма юрăхлă тесе йышăнчĕ.

А. ОРЛОВ.

Тухăçлă тырпулшăн

СОВЕТСКОЕ. «За коммунизм» колхоз 1941 çулти ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕ, пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕ. Ырашпа сĕлĕ кашни гектартан 20 центнер, кĕрхи тулă — 21 центнер туса илчĕ. Çакăн пекех ытти культурăсен тухăçлăхĕ те пысăк. Колхозниксене колхоз кашни ĕçкунĕ пуçне 4 килограмм таран тĕштырă валеçсе парать.

Халĕ колхозниксем кĕрсех çуракине хатĕрленеççĕ. Вĕсем ялхуçалăх инвентарĕсемпе машинăсене тахçанах типĕ сарая пуçтарса, юсаса лартнă. Вăрлăх фончĕсене 100 процентпех хывса çитернĕ. Халь вăрлăха сортлама тытăнчĕç.

Вырăнти удобренисене пухас ĕç начар мар пырать. Комсомолецсем паянхи куна 15 центнер ытла кĕл пухнă. Баранов бригади 46 гектар çине юр тытса хăварнă. Колхозниксем ĕçре хăйсен пысăк активлăхне кăтартаççĕ.

Я. СИГАЙ.

Ленина асăнса литература вечерĕ пулнă

Январĕн 22-мĕшĕнче чăваш совет писателĕсем Хĕрлĕ Çарăн Н-ски чаçĕнче Ленина асăнса литература вечерĕ туса ирттерчĕç.

Вечерта П. Г. Григорьев юлташ Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсене СССР халăхĕсен туслăхĕ çинчен тата чăваш халăхĕн иртнĕ кунçулĕпе хальхи пурнăçĕ çинчен доклад туса пачĕ. Халăх поэчĕ, орденоносец Н. И. Шелепи хăйĕн «Ленин», «Сталин» тата «Хĕрлĕ Çар» ятлă сăввисене вуларĕ. Н. Васянка тата С. Шавлы поэтсем Ленин çинчен, халăхсен туслăхĕ тата Хĕрлĕ Çар çинчен сăвăсем вуласа пачĕç. Мускав поэчĕ К. Арсенева хăйĕн çĕнĕ сăввисене вуларĕ.

Чăваш совет писателĕсен Союзĕн председателĕ И. Тукташ Н-ски чаçри боецсемпе командирсене кĕскен чăваш совет писателĕсен юлашки вăхăтри ĕçĕсемпе паллаштарса саламлă сăмах тухса каларĕ. Совет писателĕсен выступленийĕсене боецсемпе командирсем ăшă кăмăлпа йышăнчĕç.

Хăй тĕллĕн вĕренекен художник

Пăрачкав районĕнчи «Факел» колхозра Б. А. Вострилов ятлă çамрăк колхозник картинăсем ӳкерме юратать.

Вострилов юлташ халĕ «Фашистла çĕлен-калтана пусса лапчăтатпăр» ятлă плакат тата «Хĕрлĕ партизансен атаки» ятлă картина çырса пĕтерни. Картинине те, плакатне те вăл пысăк ăсталăхпа çырнă.

Кусемсĕр пуçне Вострилов тата фашистсене питлесе кулакан «Гитлер ĕмĕчĕсем тата чăнни пулассисем» ятлă плакат çырса пĕтерет.

Вострилов плакачĕсемпе картинисем çавтери вырнаçуллă тата пурнăçа пĕлсе çырнă япаласем. Чăваш халăх творчествин çурчĕ Вострилов плакачĕсемпе ӳкерчĕкĕсене февралĕн 1-мĕшĕнче Шупашкарта уçăлакан фашизма хирĕçле плакатсен выставкине йышăнма палăртнă.

С—в.

Вăрман хатĕрлев ĕçне куллен ертсе пырас пулать

Отечественнăй аслă вăрçă вăрман промышленноçĕ умне пысăк задача кăларса тăратрĕ. Çав задача вăл — çĕршыва лайăх пахалăхлă йывăç ытларах хатĕрлесе парасси. Тăшмана татăклăнах çĕнтерме самолетсем, танксем, орудисем, йĕлтĕрсем тата ытти япаласем те тума лайăх пахалăхлă йывăç сахал мар кирлĕ.

Пирĕн Чăваш республики çĕршыва паха йывăç чылай пама пултарать, çавна тума вăл тивĕçлĕ те.

СССР Совнаркомĕ 1941 çулти ноябрĕн 29-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, Чăваш республикин 1942 çулта Вăрман промышленность халăх комиссариачĕн системи тăрăх пиншер кубометр йывăç хатĕрлемелле, пиншер кубометр турттармалла, пиншер кубометр палăртса хунă вырăнсене турттарса кăлармалла. Çак ĕçе ăнăçлăн пурнăçа кĕртес тесе, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ вăрман хатĕрлевĕнче декабрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа апрелĕн 1-мĕшне çитиччен çуран тата лашапа ĕçлемелли тӳлевлĕ повинность ирттерме постановлени йышăнчĕç.

Çав постановление йышăннăранпа пĕр уйăх çурă иртрĕ ĕнтĕ, анчах вăрман хатĕрлевĕнчи ĕçсем савăнмаллах марха. Вăрман промышленность халăх комиссариачĕ сезонри рабочисен вăйĕпе декабрь уйăхĕнчи задание темиçе процент кăна тултарнă. Уйăхри заданисене пĕр район та пурнăçламан. Вăрман хатĕрлевĕнчи ĕç çавнашкал япăх пыни Вăрман промышленность халăх комиссариачĕпе вырăнти совет тата парти организацийĕсене ĕçе йĕркелес тĕлĕшпе шухăшлаттармалла пек, анчах январĕн малтанхи çурри уйăхĕнчи итогсем çавнашкалах ĕç япăх пыни çинчен калаççĕ. Районри руководительсем вăрман хатĕрлев ĕçĕ мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине халĕ те тавçăрса илмен-ха.

Çавна пулах Ишлей районĕ январĕн 10-мĕш тĕлне вăрман хатĕрлемеллипе турттармалли плана пĕр процент кăна тултарнă. Çавнашкалах Вăрнар, Сĕнтĕрвăрри районĕсем те вăрман хатĕрлевĕнче япăх ĕçлеççĕ. Вăрман хатĕрлев ĕçĕ япăх пынин тĕп сăлтавĕ—районри совет тата парти организацийĕсем вăрман хатĕрлевне çителĕклĕ таран вăйсем мобилизацилеменнинче. Сăмахран, Ишлей, Вăрнар, Сĕнтĕрвăрри, Хĕрлĕ Чутай районĕсенчен çурран тата лашапа ĕçлеме планпа пăхнинчен 20—30 процентчĕ кăна тухаççĕ. Çак районсенчи руководительсем государство заданине вăрçă вăхăтĕнче уйрăмах срокра пурнăçлама кирлине хăçан ăнланса илеççĕ-ши?

Вăрман хатĕрлевне ертсе пырас ĕçе вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетмелле. Вăрман ĕçне рабочисене массăллăн хутшăнтармалла, хĕллехи вăхăтра плана тултарма тăрăшмалла, ĕçе çуркуннене хăвармалла мар. Хĕллехи вăхăт — вăрман хатĕрлевĕнче чи лайăх вăхăт. Хĕлле колхозсенче ĕçрен пушаннă çынсем те, лашасем те пур. Çавăнпа та эпир вăрман хатĕрлев планне мĕн чухлĕ хăвăртрах тултаратпăр, çавăн чухлĕ çуракине те лайăхрах хатĕрленĕпĕр.

Хăшпĕр районсенчи партипе совет организацийĕсен руководителĕсем иртнĕ çулти йăнăшсене кăçал та тăваççĕ. Сăмахран, Улатăр, Хĕрлĕ Чутай районĕсенче вăрманта ĕçлеме бригадăсем организацилемеççĕ, колхозниксене татăклă заданисем памаççĕ, лашасем валли çителĕклĕ таран апат-çимĕç парса ямаççĕ. Çавна пула вăрмана ĕçлеме кайнă колхозниксем ĕçе лайăххăн хăнăхса çитиччен каялла таврăнаççĕ. Çапла рабочисем куллен улшăнса тăни ĕçре питĕ пысăк чăрмав кӳрет. Çавăнпа та вăрман ĕçне янă чухне колхозниксенчен бригадăсем организацилесе, выльăх апачĕ тата ытти кирлĕ япаласем çителĕклĕ таран парса, чылай вăхăт ĕçлемелле ярас пулать.

Вăрман хатĕрлев организацийĕсенчи руководительсен чылайĕшĕн ĕçре вăрçă вăхăтĕнчи пуçарулăх çук. Кунта çапла фронта кайнă квалификациллĕ рабочисем вырăнне çĕнĕ кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе сӳрĕк ĕçлеççĕ. Стахановла шкулсем организацилемен, мастерсемпе, стахановецсемпе, двухсотниксемпе производствăллă канашлусем вăхăтран вăхăта кăна ирттереççĕ. Тиемелли, пушатмалли механизмсемпе туллин усă курмаççĕ. Пĕр сăмахпа каласан, вăрман хатĕрлев ĕçĕнче ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек кĕрешмеççĕ.

Арçынсемпе хĕрарăмсем нумайĕшĕсем вăрман хатĕрлев ĕçне малтанхи хут пуçласа пынă. Вĕсем çине тăрсах ĕçлесшĕн. Анчах ĕç майĕсене пĕлмеççĕ, час-часах вăрманпромхозсемпе вăрманпункчĕсенчи работниксенчен пулăшу та илеймеççĕ. Вăрман промышленноçĕн халăх комиссариачĕпе вăрман ĕçĕнчи рабочисен союз обкомĕн вăрман хуçалăхĕсемпе вăрманпункчĕсене стахановла шкулсем организацилеме тата производствăллă канашлусем йĕркеллĕ туса пыма пулăшмалла. Партин районри организацийĕсен вăрманта рабочисем хушшинчи политикăллă агитаци ĕçне лайăх организацилемелле. Рабочисем хушшинче Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа вăрман хатĕрлевĕн планне срокчен тултарассишĕн социализмлă ăмăртăва анлăн сарма кирлĕ.

Н. ДОЛБИЛОВ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 6—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—6—23.

НТ 26 Типография №1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 2, [illegible]